ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

# Чăваш хĕрарăмĕ

14(1242) №, 2022, ака/апрель 14

16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.




Вера АРХИПОВА архивĕнчи сăн ÿкерчĕк.

6 стр.

Пултарулăх

# Чунра юрату пулмасан...

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.).

**«...Чăн-чăн юратăва тĕнче уçлăхĕпе танлаштарма пулать. Хĕвел вучĕллĕн юратма кашни çын пултараймасть. Савнă çыншăн вутта кĕме те, шыва сикме те хатĕр пулмалла. Юрату хавхалантарать, чуна çунатлантарать. Юрату вутне лексе курмасăр пурнăç техĕмне туйма çук.**

**Юрату вăл – мăшăр çунат. Хĕвеллĕ тӳпере ыткăнтарать, аçа çапса çĕвакан çумăр айне те пусарать, юрлă-пăрлă çил-тăманра аташтарать. Юрату пуш хире те чечеклентерет, çут çанталăк вара тĕлĕнмелле ачаш та хитре кĕвĕпе тулать. Кашни çын ырă пирĕшти пекех туйăнать. Пулма пултарайман чăнлăх вăл – юрату...»**

Чи асамлă туйăм çинчен çакăн пек шухăшлать вăл – Чăваш наци библиотекин искусствăпа литература пайĕнче информаципе тивĕçтерекен тата массăллă ĕçшĕн яваплă тĕп специалист Вера Архипова. Наци библиотекин «Мерчен» юрă-кĕвĕ тĕпелĕн хуçи те вăлах – черчен те сăпайлă Вера Севастьяновна. Республика, хула шайĕнчи тĕрлĕ мероприяти пуçаруçи вăл. Чăваш наци конгресĕнче – культура комитечĕн ертӳçи. РФ Журналистсен союзĕн членĕ. Нестер Янкас, Алексей Талвир, Иван Яковлев ячĕллĕ чăваш наци премийĕсен лауреачĕ. Унăн пархатарлă ĕçĕсен спископе темĕн вăрăмăш тăсса кайма пулать. Çавăнпа тӳрех ыйту çуралать – мĕнле майпа пур çĕре те, пур ĕçе те ĕлкĕрет-ха вăл? Ăçтан вăй-хал çитерет? Статьяна ахальтен мар юрату çинчен пуçларăмăр. Ĕçе, пурнăçа, çынна юратни çав таран хавхалану кӳрет те ăна, чунĕ ырăлăхпа тапса тăраканскерне.

Чи малтанах «Мерчен» тĕпелĕн сăпайлă хуçи пек пĕлеççĕ ăна. Çавăнпах юрă-кĕвĕ тĕпелĕпе тĕплĕнрех паллашар-ха. «Мерчен» 2012 çулта ĕçлеме пуçланă. Ăна аталантарма ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ С.Макарова, музыка тĕпчевçи М.Кондратьев профессор, ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ Н.Казаков композитор пулăшнă. Халĕ «Мерчене» Раççей шайĕнче те лайăх пĕлеççĕ.

Маттур çак пике Çĕмĕрле районĕнчи Юманай ялĕнче çуралса ӳснĕ. Ашшĕ Севастиан Михайлович шкул директорĕнче ĕçленĕ, амăшĕ Ольга Александровна ачасене чăваш чĕлхипе литератури вĕрентнĕ.

«Анне шкулта фольклор ансамблĕ йĕркеленĕччĕ, унта ватти-вĕтти çӳретчĕ. Районти ялсене те концертпа каяттăмăр. Атте çыравçăсемпе, ӳнерçĕсемпе, артистсемпе, республикăри паллă çынсемпе туслăччĕ. Вĕсене шкула тĕл пулăва яланах чĕнетчĕ. Совет Союзĕн Геройĕ Федот Орлов хăнара пулни халĕ те асра. Паттăр летчик чăваш улăпĕ пекех туйăнчĕ мана. Герасим Харлампьев илĕртӳллĕ калаçма пĕлетчĕ, хаваслăхĕпе, ăшă куллипе тыткăнлатчĕ. Мĕн ачаранпах тăван культурăн чĕрĕ юхăмĕнче «ишнĕ» эпĕ», – калаçса кăтартать хăй çинчен Вера Архипова.

Çак туртăм унăн ачисене те куçнă. Хĕрĕ Янина педагогика университечĕн ӳнерпе графика факультетĕнчен вĕренсе тухнă. Кĕçĕнни Максимилиан журналистикăра калем çивĕчлĕхне тĕрĕслет. Вера Севастиановна хăй вара Хусанти культура институтĕнче ăс пухнă.

«1985 çулта институт дипломне алла илсен Шупашкарти Корней Чуковский ячĕллĕ ача-пăча библиотекинче ĕçлеме пуçларăм. Çынсемпе ĕçлес, мероприятисем иртте рес килетчĕ. Çĕнĕ кĕнекесен хăтлавĕсене йĕркелеме пуçларăм. Ачасем йышлăн пуçтарăнатчĕç. Çакна кура тĕрлĕ темăпа тĕл пулусем иртте рме тытăнтăм. «Вера Севастиановна килсен библиотека ĕçĕ уçăлсах кайрĕ», – тетчĕ Елена Васильева, методикăпа библиографи уйрăмĕн ертӳçи», – аса илет çамрăклăхне Вера Архипова.

Паян вăл тĕп ĕçĕнче вăй хунисĕр пуçне чăвашлăх юхăмне хастар хутшăнса вăйлă карап пек ишет малалла. Хăй хыççăн ыттисене те хăватлăн ертсе пырать. Хастар хĕрарăмăн пултарулăхне, хастарлăхне хак парса ăна нумай-нумай хисеп хучĕпе чысланă. Вера Севастиановна – Раççей, республика шайĕнчи тĕрлĕ конкурс лауреачĕ. Çĕршыври ача-пăча çыравçисен пĕрлешĕвĕн «Светоч просвещения» орденне тивĕçнĕ вăл.

Çак кунсенче вара Чăваш наци конгресĕн культура комитечĕшĕн тĕлĕнмелле хĕрӳ вăхăт – Шупашкарта ака уйăхĕн 16-мĕшĕнче пĕтĕм чăвашăн «Кĕмĕл сасă» фестиваль-конкурсĕ иртет. Ăна çӳллĕ шайра йĕркелессишĕн яланхи пекех Вера Архипова ертсе пыракан пултарулăх ушкăнĕ тăрăшать. Унăн лауреачĕсемпе, çĕнĕ ятсемпе вулакана каярахпа паллаштарăпăр-ха. Халĕ вара Архиповсен йăхĕ çинчен малалла вуласа пĕлер.



● «МЕРЧЕН» ТĔПЕЛĔНЧЕ А.АСЛАМАС ТĂВАНĔСЕМ ПУХĂННĂ.



● ИЛЕМЛĔ ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔН ÇИ-ПУÇĔ.

## Каш та каш кашлать йăмра

«Юманай ялĕнче, Архиповсем пурăнакан кил-çурт умĕнче, ватă йăмра ларать. Тем те курнă çав лаштра йăмра, тем те ас тăвать чăваш çыннин )çăмăл мар пурнăçне ăнланакан сăвапла йывăç. Этем чĕлхипе калаçма пĕлес пулсан çак йăмра пире Архиповсен йăхĕн тĕрлĕ ăрăвĕ çинчен тĕплĕнрех каласа парĕччĕ, мĕншĕн тесен вăл ниçта тапранмасăр ларать, йăлтах курать, йăлтах хăлхана чикет.

Çын пурнăçĕнчи пĕлтерĕшлĕ кашни пулăм хăйне майлă паллă йĕр хăварать. Архиповсен йăмри те çавнашкалах. Калăпăр, килет вĕсен пархатарлă кил-йышне çĕнĕ кайăк – йăмра çийĕнчех ешĕл турат кăларать. Вĕренсе тухать Юманай шкулĕнчен вăрçă хыççăнхи тепĕр хастарлă ӳсĕм – каллех ухă йĕппи пек çивĕч турат шăтать.

1957 çулта туслă мăшăрăн Вера ятлă хĕрача çуралать – йăмрашăн тесен каллех хĕвел енне парка турат ямалли паллă сăлтав. Черечĕпе мăнукĕсем те килеççĕ çутă тĕнчене. Пĕрне те сумсăр та хисепсĕр хăвармасть йăх йывăççи йăмрамăр, пурне те шута илет, пурин ятне те хĕвел умне çĕклет.

Каш та каш кашлать Юманай йăмри. Сăвă та калать вăл, юрă та юрлать, ташă та ташлать. Унăн ешĕл пуçĕнче – вун-вун, çĕрçĕр çын пурнăçĕнчи тĕрлĕрен пулăм. Йăмра тивĕçĕ – йăлтах шута илесси, йăлтах пĕр çĕре пуçтарасси, çапла майпа пурнăç кĕнекине йĕркелесси. Çăмăл мар ку ĕç. Анчах пурнăç йывăççин чăтмаллах. Çĕнĕ çынсемпе, çĕнĕ ĕçсемпе, çĕнĕ пулăмсемпе пуянланса пырать пĕрлехи ас тăвăм. Тĕнче ас тăвăмĕ. Севастиан Михайлович çырса пынисенчен пĕр пулăмне кăна итлесе пăхар-ха лаштра йăмра кашлавĕн кĕввинче.

«Эпĕ Тури Вылă çынни. Юлташ пурччĕ манăн унта. Хамран виçĕ çул кĕçĕнскер. Питĕ тăнлăччĕ. Мĕн вуланине манмастчĕ, нихçан та пуçран кăлармастчĕ. Штанаш шкулĕнче пĕрле вĕрентĕмĕр. Унăн ячĕ – Александр Артемьев. Чăваш халăх писателĕ. Проза ăсти, лайăх поэт, литература тĕпчевçи. Ун çинчен нумай çырнă, анчах çак пулăма никам та асăнман.

Саша хăй те, унăн Иван ятлă пиччĕшĕ те вăрçăра виçшер хут аманнă. Килне, амăшĕ патне, иккĕшĕн те вилнĕ хучĕсем килнĕ. Амăшĕ йĕрет, лăпланса ларма вырăн тупаймасть. Вăрçă чарăнать хайхи, çĕнтерӳ шавĕ кĕрлесе иртет. Пĕр кунхине Саша хăй урипех утса килне çитет. Амăшĕ ĕненмест, ултавлă курăну мар-ши ку, тет, ывăлĕ çине шиклен се пăхать.

– Ан хăра, анне, эпех ку, сан ывăлу, – тет Саша. Амăшĕ салтака пырса ыталать, йĕрсе ярать.

Çав эрнерех Сашăн пиччĕшĕ Иван та вăрçăран таврăнать. Çапла та пулнă пирĕн Тури Вылă ялĕнче».

Каш та каш кашлать лаштра йăмра… Ун кашни тураттин кĕввинче – тĕнче умĕнчи пулăм», – çапла курса, çапла çырса кăтартнă Архиповсен йăхĕ çинчен Чăваш халăх поэчĕ Юрий Сементер.

**Рита АРТИ хатĕрленĕ.**

В.АРХИПОВА архивĕнчи сăн ӳкерчĕксем.